К 84.89(=Чув)
Ю64
1-47144



Альбина Юрату

# Туслă çемье

Национальная библиотека ЧР
4-047144

к К 84.Р9(=Чув)
Ю64

Альбина ЮРАТУ

# Туслă çемье

*Сăвăсем*

Художникĕ *Н.А. Васильева*

кр



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2014

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-5
Ю 64

Художникĕ *Н.А. Васильева*

Проверено 1 СЕН 2017

**Альбина Юрату**
Ю 64 Туслă çемье: сăвăсем / А. Юрату. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2014. — 31 с.
ISBN 978-5-7670-2218-2

Альбина Юратăвăн «Туслă çемье» кĕнекине вуланă май куç умне кĕçĕн çулти ачасен шухăш-кăмăлĕ, ĕмĕчĕ-туйăмĕ тухса тăрать. Кукашшĕ-кукамăшĕ, ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкĕсене пулăшма яланах хатĕр. Хаваслă пулма нумай та кирлĕ мар. Туслă çемьере çитĕнни — хăех телей.

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84 (2Рос=Чув) 6-5**

И-47144

**ISBN 978-5-7670-2218-2**

Национальная библиотека Чувашской Республики

© Альбина Юрату, 2014
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2014



# Çĕкленӳллĕ кăмăл

Çĕкленӳллĕ кăмăлпа
Эп утатăп урампа.
Кашнине сунатăп сывлăх,
Кашнине сунатăп ырлăх.

Ыр сăмах — телей палли,
Ĕмĕт-шанчăкăн алли.
Йăлтăр-йăлтăр эп кулатăп,
Туссене халь саламлатăп.

Савнăçпа тапать чĕрем,
Çут шевлен чунна кĕрем.
Çăлтăрсем унта çутатăп,
Кăмăла санпа пайлатăп.



# Асамат кĕперĕ



Асамат кĕперĕ карчĕ
Хĕвел тусăм.
Тӳпере кавир вăл сарчĕ —
Мерчен пусăм.

Пĕлĕте вăййа вăл чĕнчĕ —
Васкать çумăр.
Тӳперен ӳкет пин ĕнчĕ —
Кулса кумăр.

Асамат хĕмне çил пухрĕ —
Кĕсле хатĕр!
Сар чечек пуçне ав ухрĕ —
Çулçи вĕлтĕр!

...Асамат кĕперĕн тусĕ
Ай пулар-и?
Хĕвелпи, илемлĕ эсĕ,
Ай кулар-и?



# 6 Вĕлле хурчĕсем

Вĕлле хурчĕсем сĕрлеççĕ
Ир-ирех сад пахчинче.
Ĕçчен тусăмсем пĕлеççĕ —
Пыл нумай çеçкесенче.

Хуртсем тăрăшса пухаççĕ
Тутлă-тутлă сĕткене.
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтараççĕ —
Вĕл вĕçеççĕ вĕллене.

Чечек пылĕ сар хĕвелĕн
Савăтра йăлтăртатать.
Пылак кучченеç сипетлĕн
Чунăма савăнтарать.

Кĕрхи кунсенче чирлемĕп,
Пухрăм вăй эп пыл çисе.
Пыл хурчĕсене парнелĕп
Çĕн вĕлле пит пикенсе.







# Сар автанпа сар чĕп

Вăй-халпа тулса хавассăн,
Çат! çапса ик çунатне
Авăтать автан пит ассăн:
— Ку-ка-ре, ку-ка-ре-ку...
Эп сунатăп ырă кун...
Вĕçĕттĕм хĕвел патне...
Парăттăм ăна парне —
Чи илемлĕ юррăма,
Сарă тулăпа ăман...
...Картишрех паян юлам,
Ĕçĕмсем нумай çав ман.

Эй, ҫынсем, савса сире
Шăрататăп ҫĕн юрра.
Васкăр хăвăртрах хире,
Ĕҫлекен ялан сумра.

Сар автан ҫӳрет мăнаҫлăн:
Пуҫне каҫăртнă ирех.
Чăх чĕппи чупать ун хыҫҫăн:
— Чĕв, чĕв, чĕв, эп чиперех,
Чĕв, чĕв, чĕв, ҫиес килет...
Хырăм хыр тăрне вĕҫет...

Ăмăртса ҫĕр чакалаççĕ
Чăпар чăх, сап-сар автан,
Тăпрара ăман тупаççĕ,
Савăнсах ав калаҫаççĕ.
Сар чĕппе чĕнет автан:
— Кил-ха, чĕппĕм, апатлан,
Пĕчĕк хырăмна тултар,
Аннӳне эс савăнтар...





# Кукаçи



Шур сухаллă кукаçи
Шуçăмпа пĕрле тăрать.
Кукаçи, эс пăтă çи,
Тӳрех вăй-хал хушăнать.

Анне пăтă пĕçерет
Вĕт кĕрпе сĕте ярса.
Кукаçи çу хатĕрлет
Кашăкне умне хурса.

Кантăкран шаккать шевле
Çĕн кунпа саламласа.
— Асампа чунна тĕрле,
Çи пăтта эс ырласа.

Кукаçи, санпа ирех
Эп те тухăп пахчана.
Кахалланмăп эп текех,
Мухтасам хăв мăнукна.

Кукаçи, тавах сана,
Вĕрентетĕн ĕçлеме.
Чечекленĕ пуш ана,
Курса савăп илеме...



# Кукамай, юратнӑ кукамай

Кукамай, юратнӑ кукамай,
Ӗҫӳсем, чӑнах та, сан нумай.
Ир-ирех хутатӑн кӑмака,
Куршакпа лартан унта яшка.

Кукамай, юратнӑ кукамай,
Чӑлхасем ҫыхатӑн-ҫке пӗрмай.
Эс мана саватӑн чӗререн,
Чирлесессӗн пылпала сиплен.

...Кукамай, юратнӑ кукамай,
Сан пата ҫитме тупатӑп май.
Йышӑнсам эс ӑшӑ саламсем,
Пирӗн ҫемьерен — сар розӑсем.

Кукамай, юратнӑ кукамай,
Кӑшт выртса канма шыра эс май.
Юптарса эп парӑп юмахсем,
Сан валли ҫеҫ юрлӑп юрӑсем.





# Ытарми самант

Хӗрлӗ-сарӑ лӗпӗшсем
Вӗл вӗҫеҫҫӗ улӑхра.
Ҫутӑ-ҫутӑ шевлесем
Йалкӑшаҫҫӗ уҫлӑхра.

Тин вӑраннӑ чечексем
Саламлаҫҫӗ хӗвеле.
Сапӑр селӗм лӗпӗшсем
Вӑй выляҫҫӗ ҫилпеле.

Эп чупатăп улăхпа
Лĕпĕшпе ăмăртмалла.
Хӳхĕм тусăм, эс тăхта,
Ывăнтăм, ман канмалла...

Ешĕл курăк кавир пек,
Выртрăм эпĕ месерле:
Шур пĕлĕтсем путек пек,
Хурт вĕçет сĕрле-сĕрле.

Лĕпĕшсем — сар çăлтăрсем,
Мĕлтлетеççĕ ман умра.
Шурă, хĕрлĕ чечексем
Хумханаççĕ ав çумра.

Пин саспа янрать тĕнче —
Пин тĕспе çиçен мерчен.
Çĕр-анне ытамĕнче
Ытарми самант черчен.





# Çирĕп сывлăх сунать Çĕнĕ çул 17

Хĕл Мучи раскатать утсене,
Юр пике йăл кулать илĕртсе...
Ăшăтса салампа чунсене
Çĕн çула кĕтсе илĕç çиçсе.

Юр пĕрчийĕ вĕçет тӳпере,
Шупка уйăх сапать мерченне.
Çутă туйăм — хуçа чĕрере,
Хĕл Мучи ыталать мăнукне.

Лăстăр чăрăш суллать туратне,
Йыхăрать хăй патне туссене.
Çĕнĕ ĕмĕт, хĕлхемлĕ кун-çул,
Çирĕп сывлăх сунать Çĕнĕ çул!

Çĕнĕ çул, Çĕнĕ çул, Çĕнĕ çул,
Юрату, тату пурнăç эс сун!
Çĕн телей, çĕнĕ шанчăк эс пул!
Юрăпа, ташăпа тултăр чун!

Ч-47144
Национальная библиотека
Чувашской Республики





# Хӗл Мучи пәрни

Хӗл Мучи шак-шак! шаккарӗ кантӑкран —
Туса лартнӑ Юр пике вӑл шур юртан.
Эрешлерӗ ӳркенмесӗр кантӑка,
Чӗнтӗрленӗ шур чечекӗ йӑлтӑркка!

Хӗл Мучи паян ӗҫлерӗ кунӗпе,
Тӑрӑшма вӑл хатӗр, хатӗр ҫӗрӗпе!
Шур юрпа ак витрӗ ҫӳллӗ ҫуртсене,
Ҫул-йӗре, вӑрмансене те уйсене...

Юр пике кӗтет шур юрлӑ урамра,
Аллипе сулать, чӗнет ав выляма.
Кучченеҫ эп илӗп, юлмӑп парӑмра.
Ҫӗн туспа аван-ҫке иккӗн савӑнма!



# Шанăçпа тулатăп



Мĕншĕн-ха эп пит телейлĕ,
Йăл та йăл кулатăп?
Кун паян питех илемлĕ,
Уншăн  савăнатăп.

Мĕншĕн-ха эп пит телейлĕ,
Чунпа хĕпĕртетĕп?
Ман аннен чĕри хĕвеллĕ,
Чарăнми пуплетĕп.

Мĕншĕн-ха эп пит телейлĕ,
Урампа чупатăп?
Тăван ялăм илĕртӳллĕ,
Туссемпе вылятăп.

Мĕншĕн-ха эп пит телейлĕ,
Юрласа ташлатăп?
Ман çĕршыв пурнать тĕреклĕ —
Шанăçпа тулатăп.





# Эпĕ – пĕчĕк сар хĕвел

Эпĕ — пĕчĕк сар хĕвел,
Тухрăм пĕлĕт хыҫĕнчен.
Кĕтĕм эпĕ сан хĕве,
Кăтăкларăм темĕнччен.

Шевлепе ачашласа
Эпĕ сĕртĕнтĕм пуҫна,
Йăл кулса та савăнса
Эп ҫутатрăм сан куҫна.

Шевлепе — сар турапа
Эп якатрăм сан ҫӳҫне.
Ылтăн тĕслĕ сăрăпа
Эп сăрларăм сан питне.

Пĕчĕк-пĕчĕк хĕвелсем
Ялтăраҫ сăмсу ҫинче.
Ан вăтан, ан хĕрелсем —
Чи хитри эс, хĕм-тĕнче!





# Мĕншĕн тесен...



Мĕншĕн-ха сан кăмăлу
Чи-чи-чи ырри?
Улмуççи çеçки пек,
Кĕвĕ-юрă пек.
Мĕншĕн тесен эсĕ, эсĕ ман анне.

Мĕншĕн-ха сан куçусем
Чи илемлисем?
Кăн-кăвак тӳпе пек,
Ялтăр çăлтăр пек.
Мĕншĕн тесен эсĕ, эсĕ ман анне.

Мĕншĕн-ха сан аллусем
Чи ачашшисем?
Ăшă вăркăш çил пек,
Çутă сывлăм пек.
Мĕншĕн тесен эсĕ, эсĕ ман анне.

Мĕншĕн-ха çепĕç сассу
Чи-чи лайăххи?
Пăрчăкан кĕвви пек,
Çăлкуç таппи пек.
Мĕншĕн тесен эсĕ, эсĕ ман анне.



# Сăпкă юрри

Çывăр, пĕчĕкçĕ пепкем,
Çывăр, пĕчĕкçĕ шевлем,
Çывăр эсĕ мĕн ирччен,
Юлмăн пӳлĕмре пĕччен.

Пулăп эпĕ юнашар,
Туйăмпа ачашланар.
Тутлă тĕлĕксем курса,
Çывăр хĕвел пек кулса.





Уйăх тухнă тӳпене,
Куç хĕсет çăлтăрсене,
Кантăкран пире сăнать,
Çутипе салам ярать.

Çил лăпланнă тахçанах,
Тĕлĕрет вăл пахчарах.
Çăлтăр çумăрĕ сӳнет,
Пан улми пăт-пат ӳкет.

Çăлтăр çавĕ тӳперен,
Чĕнтĕр çыхĕ шевлерен.
Илемлетĕ сăпкуна,
Эп кĕтетĕп çĕн куна...

Çывăр, пĕчĕкçĕ ачам,
Куçунтан эп чуптăвам.
Шăпчăк кайăк хăвара —
Вĕçрĕ юрă таврара.

Лăпкăн шăнкăр шыв юхать,
Вĕт чулпа вăл юмахлать.
Çывăраççĕ чечексем —
Тĕлленеççĕ тĕлĕксем.

Сывлăм уйăхпа вылять,
Çулçă çиййĕпе шăвать.
Вăл кĕтет сар хĕвеле,
Ялтăртатĕ мерченле.

Çитĕ шурăмпуç пики,
Çуккă тейĕ сан пекки.
Çывăр, пĕчĕкçĕ пепкем,
Эс — чи ăшă ыр çĕклем.



# Юратнă аннеçĕм

Ир-ирех тăрать анне,
Ирхи шуçăм куçĕнче.
Ĕç вĕрет ун аллинче —
Шăварать чечексене.

Тутлă кукăль пĕçерет,
Сиплĕ чей вăл хатĕрлет.
Кушака апат парать,
Пуçăмран мана шăлать.

Юрататăп аннене,
Мухтанап унпа чунтан.
Пулăшатăп аннене,
Тирпейлетĕп кил-çурта.

Эс, аннеçĕм, ларса кан,
Ал-уру сыв пултăр сан.
Эпĕ — санăн ик аллу,
Чи илемлĕ йăл куллу.



# Тупмалли

Ҫĕкленӳллĕ кăмăл 3
Асамат кĕперĕ 5
Вĕлле хурчĕсем 6
Сар автанпа сар чĕп 8
Кукаҫи 11
Кукамай, юратнă кукамай 13
Ытарми самант 14
Ҫирĕп сывлăх сунать Ҫĕнĕ ҫул 17
Хĕл Мучи парни 19
Шанăҫпа тулатăп 21
Эпĕ — пĕчĕк сар хĕвел 23
Мĕншĕн тесен... 25
Сăпка юрри 26
Юратнă аннеҫĕм 30





Литературно-художественное издание

*Для детей младшего школьного возраста*

**Альбина Юрату**
**(Любимова Альбина Васильевна)**

# Туслă çемье
# Дружная семья

*Стихи*

*На чувашском языке*

Художник *Н.А. Васильева*
Редактор *О.М. Иванова*
Художественный редактор *А.В. Запольская*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректор *Л.Д. Васильева*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

6+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 22.04.14. Формат 70х90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,34. Тираж 1500 экз. Заказ № 535. Изд. № 65.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.

35.00



ISBN 978-5-7670-2218-2

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ